Шупашкар район хаҫачӗ ❋ 1932 ҫулхи июлӗн 27-мӗшӗнче тухма пуҫланӑ

# ТӐВАН ЕН

93 (9083) № ❋ 2005 ҫулхи августӑн (ҫурла уйӑхӗн) 17-мӗшӗ. Юн кун ❋ Хакӗ ирӗклӗ

❂ Суйлав

## ЗАЯВЛЕНИСЕМ КИЛМЕ ПУҪЛАНӐ

**Чӑваш Республикин саккунӗпе тата Шупашкар районӗн депутатсен Пухӑвӗн июлӗн 29-мӗшӗнчи йышӑнӑвӗпе кӑҫалхи октябрӗн 16-мӗшӗнче районти влаҫ органӗсен суйлавӗ пулмалла. Ҫитес суйлавсем мӗнпе палӑрса тӑрӗҫҫӗ-ха? Ҫак тата ытти ыйтусем ҫине районти тӗп суйлав комиссийӗн председателӗ М.А.СЕМЕНОВ хурав тупма пулӑшрӗ:**

- Ҫапла, ҫывхаракан суйлавсен хӑйне май уйрӑмлӑхсем. Пӗрремӗшӗнчен, вӑл икӗ шайлӑ ят илчӗ, - **терӗ Михаил Андреевич** - Мӗншӗн тесен эпир районӑн самоуправлени органне ҫеҫ мар, тин кӑна пуҫланса каякан ялти поселенисен самоуправлени органне те суйлатпӑр. Ялсенче кунашкал сасӑлав юлашки 15 ҫулта пулман-ха. Хӑш-пӗр пӗчӗк администрацисене пысӑккисемпе пӗрлештерчӗҫ. Ҫапла вара октябрӗн 16-мӗшӗнче суйлавҫӑсем ҫак самоуправлени органӗсемшӗн сасӑлӗҫ: Шупашкар районӗн самоуправлени пуҫлӑхне; Шупашкар районӗн депутатсен Пухӑвӗн депутачӗсене; ял поселенийӗсен самоуправлени пуҫлӑхӗсене; ял поселенийӗсен депутатсен Пухӑвӗн депутачӗсене. Кӗскен каласан, суйлав участокне пынӑ сасӑлакана 4 бюллетень лекет.

**- Апла пулсан пирӗн район территорийӗнче суйлавра миҫе округ пулать-ха?**

- Чӑваш Республикин саккунӗпе тата Шупашкар районӗнчи депутатсен Пухӑвӗн йышӑнӑвӗпе килӗшӳллӗн пӗтӗмпе самоуправлени пуҫлӑхӗсен суйлавӗпе 18 муниципаллӑ округ (пӗри - Шупашкар районӗн самоуправлени пуҫлӑхӗпе, 17-шӗ ял поселенийӗсен самоуправлени пуҫлӑхӗсемпе), халӑх сасӑлакан (представительнӑй) влаҫ органӗсен суйлавӗпе 209 пӗр мандатлӑ округ (21-шӗ Шупашкар районӗн депутатсен Пухӑвӗн депутачӗсемпе, 188-шӗ районти ял поселенийӗсен депутатсен Пухӑвӗн депутачӗсен суйлассипе) йӗркелемелле. Саккунпа килӗшӳллӗн ҫак 227 округпа 5-7 ҫынран кая мар тӑракан суйлав комиссийӗсем пулмалла. Унсӑр пуҫне районта суйлавпа 57 участокра суйлав комиссийӗсем палӑртмалла. Хӑвӑрах куратӑр, миҫе теҫетке ҫынна тӗрлӗ шайлӑ суйлав комиссийӗнче ӗҫлеме явӑҫтармалла. Ҫавна май ӗнтӗ районти депутатсен Пухӑвӗ ыйтнипе ҫӗнӗ муниципалитет йӗркеленӗвӗн (хутлӑхӗн) суйлав комиссийӗн, округ комиссийӗсен полномочийӗсем республикӑри тӗп суйлав комиссийӗ йышӑннипе районти тӗп суйлав комисси ҫине тиенеҫҫӗ. Тепӗр майлӑ каласан, комисси паян хӑйне тӳрремӗнех тивекен ӗҫсӗр пуҫне тепӗр 227 округри тата муниципаллӑ комиссисен полномочийӗсене йышӑнать.

**- Ҫывхарса килекен сасӑлавпа районти тӗп суйлав комиссийӗн ӗҫе пуҫӑнчӗ те пулас.**

- Пӗтӗмӗшле илсен, пирӗн комисси июлӗн 28-мӗшӗнче ку суйлавпа ӗҫлеме пуҫланӑ. Халӗ политика партийӗсенчен, вӑл е ку хӑйтытӑмлӑх органӗсенче хӑйсен кандидатне сӗнекенсенчен заявленисем йышӑнасси пырать. Регистраци вӗҫленнӗ хыҫҫӑн халӑх патне кандидатсен пирки тулли информаци хаҫат урлӑ ҫитеретпӗр. Паянхи куна 5 заявлени пирӗн патӗнче выртать. Самоуправлени органне суйлама хӑйсен кандидатурине тӑратас текенсене тепӗр хут аса илтеретпӗр - ку тапхӑр сентябрӗн 6-мӗшӗччен ҫеҫ пулать. Августӑн 17-мӗшӗнчен пуҫласа 26-мӗшӗччен вара участокри суйлав комиссийӗсем йӗркелессипе политикӑлла партисенчен заявленисене документсене йышӑнма пуҫлатпӑр.

**- Калӑр-ха, сирӗн шутпа район ертӳҫи пулма миҫе ҫын хӑйӗн кандидатурине тӑратӗ?**

- Шутне калама йывӑртарах, ҫапах саккун тӑрӑх альтернатива пулмаллах.

**- Халӑх кашни ҫулах тӗрлӗ суйлав пулнипе сасӑлава килесшӗнех мар. Хальхинче мӗнле пулӗ-ши?**

- Президента суйланӑ чухне халӑх нумай пухӑнать, ара ҫӗршыв шӑпи пурне те канӑҫсӑрлантарать. Район хӑйне май каллех пирӗн пӗчӗк ҫӗршыв. Унӑн шӑпи те хамӑр алӑрах. Ҫавна май вырӑнти суйлава та йышлӑн килессе шанса тӑратпӑр, ку енӗпе тӗрлӗ ӗҫсем туса ирттеретпӗр. Ҫитменнине, каларӑмӑр ӗнтӗ, ҫӗнӗлӗх пур хальхинче, 4 бюллетень ҫинче пӗр-пӗр паллӑ лартас пулать.

Малтан район пуҫлӑхӗсене 4 ҫула суйланӑ пулсан, халӗ 5 ҫула сасӑ парас пулать. Ҫавӑнпа та халӑха ҫавна калас килет - пурин те суйлава килме вӑхӑт тупмаллах.

**- Кандидатсене мӗн сӗннӗ пулӑттӑр?**

- Районти тӗп суйлав комиссийӗнче 8 ҫын ӗҫлет. Суйлав мероприятийӗсем ирттерессипе пурте пӗр ҫул ҫеҫ мар вӑй хураҫҫӗ, опыт пысӑк. Пирӗн ҫапла хӑнӑхнӑ: заявлени йышӑнмалли тапхӑр пуҫлансанах кандидатсем килесшӗн мар. Пӑхаҫҫӗ, сӑнаҫҫӗ - хӑшӗ, кам хӑйне тӑратать. Юлашки эрнинче ҫеҫ вара пысӑк активлӑх кӑтартаҫҫӗ. Ҫапла вара комисси ҫине пысӑк тиев пулать. Ҫакӑн пек пулмасан лайӑхчӗ. Суйлавпа тӗрлӗ ыйту сиксе тухма пултарать. Хуравне Кӳкеҫ поселокӗнчи Шоссейнӑй урамри 11-мӗш ҫуртри иккӗмӗш хутра тупма е 2-33-38 телефонпа шӑнкӑравласа пӗлме пулать. Ирхине 8 сехетрен пуҫласа каҫхи 5 сехетчен ӗҫлетпӗр.

**- Тавах калаҫушӑн.**

**А.СУСМЕТ.**

## КӖРХИСЕНЕ ВӖҪЛЕНӖ

Ял хуҫалӑхӗпе апат-ҫимӗҫ управленийӗнчен пӗлтернӗ тӑрӑх, иртнӗ эрнере ял хуҫалӑх предприятийӗсем кӗрхисене вырса пӗтернӗ. Пӗтӗмпе 1755 гектар ҫинчен ҫапса илнӗ. Тухӑҫ кашни гектартан вӑтамран 20 центнерпа танлашать.

Тунти кун тӗлне тӗш-тырӑ культурисене пурӗ 2 пин те 527 гектар ҫинче ҫапса тӗшӗленӗ. Ҫакӑ планпа пӑхнин 21 проценчӗ.

**И.ИРИДОВА.**



**В.В.Викторов Ленин ячӗллӗ хуҫалӑхра чӗрӗк ӗмӗр ытла вӑй хурать. Ертӳҫӗсем Виктор Валентинович ӗҫӗпе кӑмӑллӑ. Выльӑх-чӗрлӗх валли апат хатӗрленӗ тапхӑрта ӑна FC 303 RGL-па уйра курма пулать.**

❂ Шкул

## ЧИ ЛАЙӐХ ВӖРЕНӲ УЧРЕЖДЕНИЙӖ

Район администрацийӗн вӗренӳ управленийӗ йӗркеленипе пӗлӳ паракан учрежденисем хушшинче кашни ҫулах хӑйне май ӑмӑрту иртет. Вӗренӳпе воспитани процесӗнче, материаллӑ техника базине ҫирӗплетессипе ҫитӗнӳ пулсан унта мала тухас шанӑҫ пысӑк. «Опыт ҫакна кӑтартса парать: кунашкал мероприятисем творчествӑлла пуҫарӑва аталантарма, ҫӗнӗ йышши технологие пурнӑҫа кӗртме, чи лайӑх педагогика коллективӗсене хавхалантарма кирлӗ»,- пӗлтерчӗҫ управлени специалисчӗсем.

Нумаях пулмасть шкулсемпе ача-пӑча сачӗсен хушшинчи ӑмӑртӑвӑн пӗтӗмлетӗвне палӑртнӑ. Камсем-ха вӗсем малтисем? Комисси Тренккассинчи тӗп пӗлӳ паракан, Карачурари вӑтам пӗлӳ паракан шкулсем, Кӳкеҫри «Колосок» ача-пӑча сачӗ пӗррелмӗш вырӑна тухнине пӗлтернӗ. Кӳкеҫри лицей, Янӑшри вӑтам шкул, Тутаркассинчи «Золушка» ача сачӗ хальхинче иккӗмӗшсем пулнӑ. Вӑрман-Ҫӗктерти тӗп шкул, Ҫатра Лапсар вӑтам шкулпа Ҫӗньялти «Пепке» садик та призлӑ вырӑнта - виҫҫӗмӗшсем.

Нумаях пулмасть иртнӗ вӗренӳ управленийӗн канашӗн ларӑвӗнче ку ӑмӑрту енӗпе кӑшт улшӑнусем кӗртнӗ. 2004-2005 вӗренӳ ҫулӗнче олимпиада ППЭ, шкул ачисен спартакиадин кӑтартӑвӗсене, художество пултарулӑх ушкӑнӗсен ӗҫӗсене, шкул ҫумӗнчи лаптӑксене мӗнле пӑхса тӑнине, бюджет сметине пурнӑҫланине, ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне мӗнле хатӗрленнине ҫеҫ пӑхнӑ пулсан, килес пӗлӳ ҫулӗнче информаципе коммуникаци технологийӗпе вӗренӳ процесӗнче мӗнле усӑ курнине те шута илӗҫ.

Кӑҫалхи призерсене педагогсен августри канашлӑвӗнче наградӑлама палӑртаҫҫӗ.

**А.АРДАЛИОНОВА.**

❂ 01 асӑрхаттарать

## КАМ? ПАЛЛӐ МАР

Виҫӗм кун, августӑн 15-мӗшӗнче, ҫӗрле 10 сехетре Кӳкеҫри пушар чаҫне шӑнкӑрав пулать. Ҫулӑма парӑнтарма «Байдеряковская» урама (Патирек ялне) тӳрех 2 машина тухать. «Эпир ҫитнӗ ҫӗре 5х4 метр калӑпӑшлӑ кирпӗч дачаҫурт ҫунса пӗтнӗпе пӗрехчӗ. Пушара сӳнтернӗ хыҫҫӑн ҫакӑ паллӑ пулчӗ: ҫуртра кӑмака та пулман, ҫутӑ та кӗртмен. Вутпа кӗрешнӗ чухне дача ҫуртне кӗмелли алӑк патӗнчен инҫех мар ҫын виллине тупрӑмӑр. Территорине кӗмелли калитке те яр уҫӑччӗ, ҫурт алӑкне те шалтан питӗрмен. Ҫурт кам ҫинче пулни те, пурнӑҫран уйрӑлнӑ ҫын кам пулни те хальлӗхе паллӑ мар. Пӗлекенсене, куракансене телефонпа шӑнкӑравлама ыйтатпӑр»,- пӗлтерчӗҫ патшалӑх пушар надзор инспекцийӗнчен.

**А.АЛИНИНА.**

## ҪӐМАРТА ТУСА ИЛЕССИ ӲСНӖ

Ял хуҫалӑх тата апат-ҫимӗҫ управленийӗнчен пӗлтернӗ тӑрӑх, кӑҫалхи ҫулӑн юлашки 7 уйӑхӗнче кайӑк-кӗшӗк ӗрчетекен организацисенче ҫӑмарта туса илесси 3.. процент чухлӗ ӳснӗ, вӑл пурӗ 64,2 млн. штукпа танлашать. Чӑхсен вӑтам ҫӑмарта тӑвасլӑхӗ - 174 штук. Пӗлтӗрхипе танлаштарсан, ҫакӑ пӗр ҫӑмарта ытларах пулать.

«Чебоксарская птицефабрика» тулли мар яваплӑ общество ӗҫченӗсем хӑйсемех районти пӗтӗм кӑтартӑвӑн 93,2 процентне пурнӑҫланӑ. Асӑннӑ фабрикӑра, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, ҫӑмарта туса илесси 1,4 хутчен ӳснӗ.

**А.ИЗМАН.**

## КВОТӐПА ИЛЕҪҪӖ

«Организацисенче инвалидсене квотӑпа ӗҫе илесси» ЧР саккунне районти 28 предприятире пӑхӑнса ӗҫлеҫҫӗ. 18 организацире палӑртнӑ квотӑпа 100 процент ытла усӑ курнӑ. Тӗслӗхрен, 91 ӗҫ вырӑнӗнче 106 инвалид тӑрӑшать. 8 предприятире вара ҫак майпах тепӗр 29 ҫынна ӗҫе илме пулать. Икӗ предприятире 7 квота валли вакансисук-мӗн.

**А.ТИМОФЕЕВА.**

❂ Республика хыпарӗ

## АСЛӐ ВӖРЕНӲ ЗАВЕДЕНИЙӖ УҪӐЛАТЬ

Чӑваш Ен Президенчӗ Николай Федоров Министрсен Кабинетне Мускав автоҫул институчӗн филиалне Ҫӗнӗ Шупашкар хулинче уҫас тӗлӗшпе тивӗҫлӗ йышӑнусем туma хушнӑ. Ҫак проекта пурнӑҫа кӗртме институтa арендӑна ҫӗр, 50 миллион тенке яхӑн республика харпӑрлӑхӗ шутланакан ҫуртсемпе сооруженисене параҫҫӗ.

**ЧР ПА пресс-службы.**

❂ Ҫул тӑватпӑр

## ЧӐРМАВ ПУЛМАЛЛА МАР

Виҫӗм кун район администрацийӗн ертӳҫи А.Князев, унӑн ҫумӗ - капиталлӑ строительство тата пурӑнмалли ҫуртйӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх управленийӗн пуҫлӑхӗ В.Сидоров «Иккасси - Шаккӑл - Платка» ҫул тӑвас ӗҫ епле вӗҫленӗ те ӗнтӗ. Виҫӗм кун щебень сарма тытӑннӑ. Ӗҫ кунне 150-200 метра яхӑн пурнӑҫланать. Вак чула Ишлей станцийӗнчен КаМАЗсемпе турттараҫҫӗ. Унта вара ӑна Уралтан кӳрсе килеҫҫӗ. «Инҫетрен илсе килме тӑкаклӑ



пынипе вырӑна ҫитсе паллашрӗҫ.

Кӑҫал район бюджетӗнчен пӑхса хӑварнӑ суммӑпа - 10 миллион тенкӗ яхӑн - килӗшӳллӗн асӑннӑ ҫула, Шаккӑл ялне ҫити, 1,2 ҫухрӑм хывмалла. Ку ӗҫе пурнӑҫлама районти ДРСУ подрядлӑ организацие шаннӑ. Икӗ уйӑхра вӗсем палӑртнӑ ӗҫ калӑпӑшӗн ҫуррине мар-и?»- пулчӗ ыйту. «Ку ГОСТпа тивӗҫтерекен, 1200 маркӑллӑскер, питӗ ҫирӗп. Пахалӑхлӑ япалан тӑкакӗ ялан саплашӑнать»,- тет ДРСУ директорӗ А.Викторов. Асфальте октябрь уйӑхӗччен вӗҫлесшӗн. Александр Васильевич каланӑ тӑрӑх, чӑрмав финанс тӗлӗшӗнчен те, техника енчен те пулмалла мар.

**И.ВАСИЛЬЕВА.**

